*Л.П.Сергеев*
*Чувашский государственный пединститут*

# ЧĂВАШ БУКВАРĔН ИСТОРИЙĔ

1. Букварь - пуçламăш шкулăн пĕрремĕш класĕнче вулама - çырма вĕрентмелли пĕрремĕш кĕнеке. Чи малтанхи чăвашла букварь 1804 çулта Мускавра "Начальное учение человеком, хотящим учитися книг божественного писания" кĕнекере пичетленнĕ. Çак кĕнекен пĕрремĕш пайĕ букварь шутланать, унăн иккĕмĕш пайĕнче вара пĕчĕк катехизиса чăвашла куçарса панă. Букварь тытăмĕпе содержанийĕ çав вăхăтра пичетленнĕ вырăс букварĕсеннипе пĕрешкел: алфавит, вулама вĕрентмелли сыпăксем, саспаллисен ячĕсем, хăш-пĕр хисепсене пĕлтерекен саспаллисем. Тӳрех калас пулать, кунта чăваш материалĕ пачах çук, çавăнпа паянхи ăспа хаклас пулсан, чăваш букварĕ тесе калама та май килмест. Ăна чăваш ачисем валли ятарласа хатĕрленине шута илсен çеç чăвашсен пирвайхи букварĕ тесе хаклама пулать.

2. Иккĕмĕш чăваш букварĕ 1832 çулта вырăсларан чăвашла куçарнă "Начатки христианского учения или краткое священная история и краткий катехизис" кĕнеке умĕнче "Букварь для обучения чтению по-чувашски. Хотла вирянясь-шин чувашь чельгибе" ятпа пичетленнĕ. Авторĕ В.П.Вишневский. Букварь тытăмĕпе содержанийĕ каллех вăл вăхăтри букварьсеннипе пĕр евĕрлĕрех (вырăс букварĕсен тытăмĕ питĕ уççăн палăрать): малтанхи страницисенче - алфавит, тĕрлĕ сыпăксен тĕсĕсем. Алфавитра 33 саспалли, вĕсенчен хăшĕ-пĕрисем диграфсем (о,у,ьи).

Букварьте те, В.П.Вишневскин ытти ĕçĕсенче те пĕр çитменлĕх уççăн курăнать: тĕпчевçĕ чăваш сăмахĕсен сасă тытăмне тĕрĕс уйăрса илеймен пирки çырура вĕсене тĕрĕс палăртайман. Çакă вăл саспаллисене сыпăнтарса вулама-çырма вĕрентмелли меслет хуçаланнă вăхăтра ачасене пысăк усă кӳме пултарайман.

3. Виççĕмĕш чăваш букварьне вăл вăхăтри паллă чăваш тĕпчевçи Н.И.Золотницкий çырнă, вăл 1867 çулта "Чуваш кнеге" ятпа уйрăм пичетленсе тухнă (унăн 2-мĕш кăларăмĕ 1870 ç. пи-

четленнĕ), çавăнпа та ăна тĕпчевçĕсем ятарлă пĕрремĕш чăваш букварĕ тесе хаклаççĕ (В.Г.Егоров, И.П.Павлов, Н.П.Петров). Букваре автор вырăссен паллă педагогĕ К.Д.Ушинский хатĕрленĕ меслете тĕпе хурса çырнă. Ку вăл - сасă меслечĕ, саспаллисене сыпăнтарса вулама-çырма вĕрентмелли меслетрен пачах уйрăлса тăраканскер. Ăна пурнăçа кĕртни вулама-çырма вĕрентес ĕçе лайăхлатма пысăк майсем туса панă, ачасен ĕçне те, учитель ĕçне те самаях çăмăллатнă.

Тĕпчевçĕ чăваш алфавитне те çĕнĕлле йĕркелет, унта пуçласа э саспалли тата ытти çĕнĕлĕхсене кĕртет. Апла пулин те, унăн 32 саспаллиллĕ алфавичĕ чăваш чĕлхин сасă тытăмне тĕп-тĕрĕс палăртайман. Алфавитри çитменлĕхсем (пĕр сасса темиçе саспаллипе палăртни, пĕр саспалли темиçе сасса пĕлтерни, чĕлхери **ă, ĕ, ç** сасăсене палăртмашкăн ятарлă саспаллисем шыраса тупайманни) чăвашла вулама-çырма вĕренекен ачасем умне самаях пысăк йывăрлăхсем кăларса тăратнă. Çапах та Н.И.Золотницкий букварĕ чăваш ачисем валли хатĕрленĕ унчченхи кĕнекесенчен палăрмаллах уйрăлса тăрать.

4. Н.И.Золотницкий букварĕ хыççăн вулама-çырма вĕрентес, ăна пурнăçлама пачах урăхла букварь хатĕрлес ĕçĕн çĕнĕ тапхăрĕ пуçланать. Вăл паллă чăваш просветителĕ И.Я.Яковлев ячĕпе çыхăннă. И.Я.Яковлев - çĕнĕ чăваш çырулăхне пуçарса яраканĕ, ачасене хутла вĕрентес ĕçе çĕнĕлле йĕркелекенĕ. Унăн пирвайхи букварĕ 1872 çулта "Чăваш ачисене çырăва вĕренмелли кĕнеке" ятпа пичетленсе тухнă. Букварĕн уйрăмлăхĕсем: а) вулама вĕрентессин никĕсĕ - сасă меслечĕ; ă) вулав материалĕн никĕсĕ - анатри диалект; б) кашни уçă сасăпа хупă сасса палăртма ятарлă паллăсемпе усă курни.

5. Пĕрремĕш букварьте çитменлĕхсем те пур, ăна И.Я.Яковлев хăех лайăх туйнă, çавăнпа вĕсене пĕтерес ĕçе тӳрех тытăннă: а) алфавитри саспаллисен йышне чакарнă (47-рен 27 çеç хăварнă ); ă) çĕнĕ саспаллисем **(л, н, ť, ç, ţ)** кĕртнĕ; б) **й** саспаллине j-па ылмаштарнă; в) текстсемпе нумай ĕçленĕ. Вара бук-

варĕн иккĕмĕш кăларăмĕ 1872 çулта Хусанта "Çырăва вĕрене тытăнмалли кĕнеке " ятпа пичетленсе тухнă.

6. Букварĕн виççĕмĕш кăларăмне И.Я.Яковлев каллех юсаса тӳрлетсе "Букварь для чуваш с присоединением русской азбуки" ятпа 1873 çулта пичетлесе кăларать. Алфавитра 25 саспалли хăварать, ытти çĕнĕлĕхсене кĕртет. Виççĕмĕш кăларăма анлăраx тĕллевпе хатĕрленĕ: вăл çак кăларăмран чăвашла çеç мар, вырăсла вĕренмелли, çавна май вырăс культурипе паллашмалли учебник та пулса тăнă.

7. И.Я.Яковлевăн букварĕсемпе чăваш ачисем Октябрь революцийĕччченех вĕреннĕ, çак хушăра вăл (букварь) 33 хутчен пичетленсе тухнă. Паллă просветителĕн букварĕсем чăваш ачисене а) сасă меслетне тĕпе хунă пирки чăвашла та, вырăсла та çăмăллăн вулама-çырма вĕрентнĕ; ă) чăваш фольклорĕн тата вăл илсе пыракан чăваш литературин ырă тĕслĕхĕсемпе паллаштарса пынă; б) вырăс литературин куçарăвĕсене вулама май туса панă, çакă вăл вырăс литературин оригиналĕсене вулама хистенĕ; в) кăмăл-сипет тĕлĕшĕнчен ырă та сăпайлă çынсем пулма вĕрентнĕ.

8. И.Я.Яковлев букварĕсен пуян опычĕ чăваш шкулĕсем валли анализ-синтез сасă меслечĕпе çĕнĕ йышши букварьсем çырса хатĕрлемелли никĕс пулса тăчĕ.

*Эсим Кязым*

*Республика Турция,*

*В.А.Андреев*

*Чувашский государственный университет*

## И.Я.ЯКОВЛЕВ О ЧУВАШСКОМ ЯЗЫКЕ И ЕГО ИССЛЕДОВАТЕЛЯХ

Языковую среду в середине XIX в., в которой вырос И.Я.Яковлев, как и многих чувашских деревень того времени, можно охарактеризовать как моноязычную. Однако уже в то время существовали двуязычные и трехъязычные населенные пункты, например село Старые Бурундуки с чувашским и рус-